### Врач канашĕ

# Грипп чирĕнчен асăрханăр



Хальлĕхе пирĕн района грипп чирĕ çитеймен-ха, анчах та нихăш çул та вăл айккипе иртсе каймасть. ВОЗ специалисчĕсем пĕлтернĕ тăрăх кăçал грипп эпидемийĕ февраль уйăхĕн вĕçне – март уйăх пуçламăшне лекет, инфекцийĕн А тата В формисем сарăлаççĕ. Çавăнпа та асăннă чир çинчен тепĕр хут асăрхаттарни пăсмĕ.

Грипп чирĕ сывă çынна чирлĕ çынран сывлăш урлă çăмăллăнах ерет. Хăшĕ-пĕри чире ура çинчех ирттерсе ярать. Анчах та ун пеккисем хытах йăнăшаççĕ. Асăрхаттарас килет: чирĕн çăмăл форми те организмăн хӳтĕленес пултарулăхне чылай чакарать.

Уйрăмах чир шала каясран хăрамалла. Грипп чирĕ ачасемшĕн уйрăмах хăрушă. Ачасен ашшĕ-амăшĕсен грипп мĕнле ерме пултарнине, унран мĕнле сипленмеллине лайăх пĕлмелле.

Грипп – ерекен чир. Анчах та вăл ытти ерекен чирсем пек мар, унпа чирленĕ хысçăн иммунитет (чире хирĕç кĕрешекен япала) юлмасть. Гриппа пĕр çын темиçе хутчен те чирлеме пултарать, хăш-пĕр ача вара пĕр çулталăкра темиçе хут чирлет.

Чир паллисем: пуç ыратать, шăнтса пăрахать, ӳт температури 38-40 градуса çити хăпарса каять, вăй чакать, сăмсапа сывлама йывăрланать (сăмса хупланса ларать), куççуль юхать, сасă çухалма пултарать, сыпăсем ыратаççĕ.

Организма вирус лексенех (инкубаци тапхăрĕ) çын калаçнă, ӳсĕрнĕ, сунасланă чухне сурчăк тумламĕсемпе пĕрле чире пуçаракан вируссем ун тавралла сарăлаççĕ, ытти çынсене ертеççĕ.

Чирленĕ вăхăтра харпăр хăйĕн сипленме тăрăшмалла мар, тухтăрсем патне каймалла. Вăхăтра эмеллемесен е чире ура çинчех ирттерсен, чир йывăра кайма пултарать: ӳпке шыççи пуçланать, вăта хăлха сиенленет, неврит, энцефалит чирĕсем пуçланма пултараççĕ.

Гриппа чирлес мар тесен çав тапхăрта халăх йышлă пухăнакан вырăнсенче, тĕрлĕ мероприятисенче сахалтарах пулмалла. Прививка туни хӳтлĕх системине икĕ хутченех хăпартать. Эпидеми вăхăтĕнче оксолин мацĕпе, интерферонпа, ремантадинпа, арбидолпа, тĕрлĕ витаминсемпе усă курни пулăшать. Витаминсемпе пуян апат-çимĕç ытларах çиме тăрăшмалла (пан улми, груша, купăста, лимон, ыхра тата сухан).

Чиртен асăрхаттарни никама та пăсмасть. Упранакана Турă та упрать.

**Г. СОКОЛОВА,**
**районти тĕп больницăн эпидемиологи врачĕ.**

### Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# *Çирĕм çултан коньки çине тăтăмăр*

Эх, шеремет вăхăчĕ, ăçта васкать-ши вăл. Анчах кăна шкула чупаттăмăрччĕ. Коньки сырса хоккейла выляма ялти пĕвене пуçтарăнаттăмăрччĕ. «Ылтăн шайба» турнира хаваспах хутшăнаттăмăр. Район чемпионĕ те пулса курнă эпир.

Çамрăк чухнехи пурнăç та спортра иртрĕ. Çичĕ çул «Урожай» спорт обществин районти уйрăмне ертсе пытăм.

Чăвашра ĕç çукран юлашки çулсенче Мускавра вăй хутăм. Халĕ – Чулхулара, автозаводра çĕнĕ конвейер вырнаçтаратпăр.

Яла килсе тăратăп. Кунта çемье. Мăшăр, ачасем. Тăван киле килсен вара юлташсемпе те тĕл пулатпăр. Кирек ăçта ĕçлесен те спортра пиçĕхнĕ туслăха хытă упратпăр. Хĕл кунĕсенче тĕрлĕ турнирсем йĕркелетпĕр. Волейболла, мини-футболла, баскетболла вылярăмăр малтанхи çулсенче.

Кăçал вара çамрăк чухне хоккейла вылянине аса илес терĕмĕр. Ял варринчи пĕвене юртан хырса тасатрăмăр. Пушар машинипе 3 хутчен шыв илсе килсе пăра якатрăмăр. Кунта çутă та тутартăмăр. Шупашкара кайса конькисем туянтăмăр. Шаптакпа Муркаш ветеранĕсенчен икĕ команда пуçтартăмăр. Пĕрремĕшĕнче 40 çул тултарнисем выляççĕ, иккĕмĕшĕнче – 40 çула çитменнисем.

Эпĕ хам 40 çултан иртнисен йышĕнче тĕкĕшетĕп. Пилĕк хут тĕл пулса вылярăмăр. Эпир 2 хут çеç выляса илтĕмĕр-ха, çамрăксем пире 3 хут çĕнтерчĕç. Çапах парăнма шутламастпăр-ха.

Пире курса ялти ачасем те коньки çине тăма пуçларĕç. Хоккей вăййине хăнăхаççĕ. Чи кирли – усă сывлăшра пулни, сывлăха çирĕплетни. Усал ĕç тума вăхăт çук ачасен.

Пирĕн официаллă вăйăсем вырсарни кунсенче иртеççĕ, 13 сехетре выляма пуçлатпăр. Арăмсене те пĕрле илетпĕр. Вĕсем пĕве хĕрринче вĕри чей вĕретеççĕ. Халăх йышлă пуçтарăнать.

Кăçалхи çулталăка пирĕн президент ырă ĕçсен çулталăкĕ тенĕ. Эпир те хамăр тӳпене хывас терĕмĕр. Ачасене сывă пурнăç йĕркине хăнăхтаратпăр. Хамăр та ватăлма васкамастпăр.

Спортпа туслисене Шаптак ялне хоккейла выляма чĕнетпĕр. Пурне те ырă кăмăлпа кĕтсе илетпĕр.

**Б. ВАСИЛЬЕВ.**

Шаптак ялĕ.

# *Ачаран усă тума вĕренетпĕр*

Ырă ĕç... Мĕнле ăшшăн илтĕнет вăл. Епле аван пулĕччĕ пур çын та çак сăмахпа туслашсан. Вара тĕнче те çутă, пурăнма та çăмăл пулĕччĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров 2008 çула ырă ĕçсен çулталăкне халалланă. Çавна май пирĕн шкул ачисем те кая юласшăн пулмарĕç. Вĕсем пурте шкулти «Теттесемпе шоколадсем – минтер айĕнче» акцие хутшăнчĕç. Чăннипе çырсан, шкул коллективĕ вĕренекенсем ун пек активлă хутшăнасса шанман та. Епле савăнчĕç вĕсем шкулта çавăн пек ырă кăмăллă, ăшă чĕреллĕ ачасем вĕреннĕшĕн.

Кам хăйĕн чи юратнă теттине, кам лавккаран çĕннине илсе килчĕ. Акцие хутшăнман çын юлмарĕ те пуль. Питĕ хăвăрт пухăнчĕç парнесем ача çуртĕнчи пепкесем валли. Январĕн малтанхи эрнинче шкулти директор çумĕсем В.Н. Николаева тата В.Г. Васильева теттесемпе шоколадсене Шупашкарти ача çуртне çитерчĕç.

Çакăнпа пирĕн ырă ĕç вĕçленмерĕ. Мĕншĕн тесен эпир, шкул ачисем, хамăрăн çунатлă туссем пирки манмастпăр. Хĕллехи кунсенче вĕсене апат-çимĕç тупма йывăр пулнине ăнланатпăр. Çавăнпа та кашни класс кайăксем валли сырăш тăвать. Çак ĕçе чи малтан – 6 класри Н. Чернов **(сăн ӳкерчĕкре)** тытăнчĕ.

Туссем, хамăр çинчен çеç мар, тавралăх пирки те шутлар-ха. Ырă ĕç туни хамăра лайăх пулни çеç.

**О. ПАВЛОВА,**
**10 класра вĕренекен.**



### Ыйту – хурав

# Ĕçлекен çынсен спартакиади шучĕпе

**Февралĕн 2-мĕшĕнче Муркашри Спорт çуртĕнче хĕрарăмсем хушшинче волейболла выляссипе ăмăртусем иртрĕç. Пирĕн шкул (Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул) команди те хутшăнчĕ унта. Финалта Муркаш ял тăрăхĕн командипе выляса вĕсенчен выляса илтĕмĕр пулсан та, пире ăмăрту йĕркелекенсем куçса çӳрекен кубокпа чысламарĕç, диплом кăна пачĕç. Тĕрĕс-и çакă?**

**Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче вĕренекенсем.**

***Ачасен ыйтăвĕпе район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалистне Владимир Вячеславович ПЕТРОВА паллаштартăмăр. Унăн хуравĕ çапла пулчĕ:***

– Чăнах та, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул командинчи хĕрсем финалта Муркаш ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен командинчен выляса илчĕç. Анчах манса каймалла мар, Мăнсĕнтĕрсем ĕç çыннисен спартакиадин зачетне кĕмесĕр вылярĕç. Хăйсен кăтартăвне ку зачета лартма Мăнсĕнтĕрсен командинче вылякансен ăмăрту положенийĕпе 18 çулта е аслăрах пулмалла. Çакна шута илсе Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул хĕрĕсене çĕнтерӳ тунă ятпа командăна диплом, вылякансене грамотăсемпе медальсем кăна тивĕçеççĕ. Куçса çӳрекен кубок вара спартакиада шучĕпе Муркаш ял тăрăхĕнчен пынă хĕрарăмсен командине лекрĕ. Кунта нимĕнле йăнăш та çук. Кун пирки команда представителĕсем ачасене тĕрĕс ăнлантарасса шанатăп.

**А. БЕЛОВ çырса илнĕ.**

### Редакци почтинчен

## *Тав туни*

Муркашра пурăннă пирĕн çывăх çыннăмăра Ирина Анатольевна Казамбаевана юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн «Кадастровая палата» ФГУ ĕçченĕсене, «Аршин» межевани организацине, Чăваш Республикин РФ куçман пурлăх управленийĕн районсем хушшинчи 4-мĕш уйрăмне, Муркаш ял тăрăхне, «Солнышко» ача сачĕн тата «Энергосбыт», Муркашри тĕп больница коллективĕсене, пĕрле вĕреннисене, ял-йышпа çывăх тăвансене чĕререн тав тăватпăр.

**Тăванĕсем.**

## *Пĕлтерӳсем. Объявления*

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:18 02 02:0108, местоположение: участок находится примерно в 520 м по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, ул. Мира, д. 9, площадью 6000 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:18 02 02:0058, местоположение: участок находится примерно в 675 м по направлению на юго-запад от ориентира ОМЗ-423, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, площадью 5500 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:16 03 04:0074, местоположение: участок находится примерно в 290 м по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Фронтовая, д. 4, площадью 1939 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:27 05 01:0070, местоположение: участок находится примерно в 114 м по направлению на север от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Старые Мадики, ул. Лесная, д. 21, площадью 864 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель населенных пунктов, с кадастровым номером 21:17:10 02 01:0110, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Синьял-Оринино, ул. Чебоксарская, д. 64, площадью 2484 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

**Февраль уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-868-55-01.**

**ООО «Декор» приглашает рабочих на постоянную работу по сборке корпусной мебели. Оплата сдельная, в срок.**
**Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 3. Тел.: 8-905-343-08-10, 2-16-60. 1-2.**

**Семья из трех человек снимет однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-906-130-57-66, 8-906-385-12-38.**

**Сниму квартиру со всеми удобствами.**
**Обращаться по тел.: 2-14-63.**

**МОУ «Сятракасинская СОШ» требуется водитель на школьный автобус. Требования:**
- **опыт работы на автобусе не менее трех лет;**
- **отсутствие грубого нарушения правил дорожного движения, зарегистрированного в ГИБДД за 2007 год;**
- **желательно житель д. Сятракасы или близлежащих деревень.**

**Оплата согласно штатному расписанию по 10 разряду ЕТС. Контактные телефоны: 68-2-18, 68-3-90.**
**Администрация школы.**

**8 февраля в Моргаушском РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи и других фабрик России.**

**СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ**
**8-927-666-93-95**
**от 3500 рублей**
**Предъявителю объявления визитки – скидка 2-5.**

**Участница долевой собственности Потрясилова Дарья Алексеевна, 28.05.1932 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Сесьмеры, ул. Садовая, д. 21, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования ЗАО “Колос” в поле № 1, полевой севооборот № 3, бригада № 3 общей площадью 1,42 га (пашни).**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.**

**2. Потрясиловой Дарье Алексеевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Сесьмеры, ул. Садовая, д. 21.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

Муркашри тĕп больница коллективĕпе профсоюз комитечĕ Уйкас Янасалти пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче акушеркăра ĕçленĕ

**Тамара Геннадьевна ДИМИТРИЕВА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Уйкас Янасалти пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕн коллективĕ кунта нумай çул хушши акушеркăра ĕçленĕ

**Тамара Геннадьевна ДИМИТРИЕВА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 05.02.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3631.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.